24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 ОКТЯБРЬ 4 ШАМАТКУН 234 (5949) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Кашни килограмм тырă шутра пултăр

Пухса кĕртнĕ пуян тырпула пур енчен те тĕрĕс сыхласа усрамалла. Кашни колхоз çапнă тырпула тата ытти продуктсене çирĕп шута илсе пыни кирлĕ. Пĕр килограмм тырă та шутсăр саланса пĕтмелле мар. Колхозниксем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлесе илнĕ тырпула шута илсе пырассишĕн колхоз председателĕсемпе бригадирсем ответлă пулса тăраççĕ. Çак ответлă ĕçе тӳррĕн пурнăçа кĕртсе пымалла. Весовщиксем пулса ĕçлеме шанчăклă, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене уйăрмалла, вĕсем хăйсене хушнă ĕçсене пур енчен те тӳрĕ туса пыма тивĕçлĕ.

Пур колхозсенче те халь çакăн пек çирĕп йĕрке туса хурас пулать: итем çинчен пĕр килограмм тырă та виççе шута илмесĕр аяккалла ан кайтăр. Çапла тусан çеç тырпула пĕтĕмпех шута илсе пыма пулать.

Халĕ авăн çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Нумай колхозсенче çапнă тырпула шута илессине лайăх туса пыраççĕ. Колхозниксем пĕр килограмм тырă та шута илмесĕр хăвармаççĕ. Шĕнерпусĕнчи «Молния» колхозра (Шупашкар р.) çапнă тырра кĕлете хуриччĕн икĕ хут виçеççĕ, малтанхи хут—итем çинче, склада хурас умĕн тепре виçеççĕ.

Хăшпĕр колхозсенче тырăна виççе шута илессине ытлашши ĕç вырăнне хураççĕ. Капла шутлани тĕрĕс пулмасть. Учет ĕçне тивĕçлипе йĕркелемесĕр, тырпул тăккаланассине тата ăна çаратассине пĕтерме çук. Ăçта учет ĕçне япăхтарса янă, унта яланах тăкак тата çарату пулса пырать. Тырпула лайăх сыхласа усрассишĕн колхозри пур колхозниксен те çине тăрса кĕрешмелле. Мĕншĕн тесен, итем çинче пухса кĕртнĕ тырă вăл колхозниксен ылттăн фончĕ пулса тăрать.

Партипе правительство ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле туни—колхозниксен ĕçлес хастарлăхне темиçе хут ӳстерчĕ. Уйхир бригадинче ĕçлекен кашни колхозник вăйлă тырпул туса илессишĕн стахановла ĕçлерĕ. Халĕ вĕсем стахановла ĕçсемшĕн ĕçкунĕсем çумне хушса натурăпа тырпул илме тивĕç. Çак ĕçе тĕрĕс туса ирттерес тесен, чи малтан кашни бригада тата звено хăй çумне çирĕплетсе панă участок çинче мĕнчул тырпул туса илнине шута илмелле.

Тырпул тухăçне звеносем тăрăх тĕрĕс шута илсе пыракан колхозсенче кашни бригадăпа звенон ĕç результачĕ куç умĕнче. Пирĕн республикăра тырпул тухăçне планпа пăхнă виçерен ирттерсе тултарнă бригадăсемпе звеносем çĕршерĕн шутланаççĕ. Ишлей районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхозри иккĕмĕш бригадăн иккĕмĕш звени кашни гектартан вăтам шутпа планран ирттерсе 6-шар центнер, пĕрремĕш звено планран ирттерсе 50 центнер ыраш туса илнĕ. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз кăçал планпа пăхнинчен ирттерсе 1.200 пăт ыраш пухса кĕртрĕ. Сорокин юлташ звени тырпул тухăçне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн ĕçкунĕ çумне хушса 12 центнер ыраш илет. Колхозра вăй-хала хурса ĕçленĕ Т. Скворцова, А. Козлова, М. Сорокин, А. Зайцева т. ыт. колхозниксем ĕçшĕн хушса тӳлемелли çĕнĕ йĕрке тăрăх 1—2-шер центнер тырă илеççĕ.

Шел пулин те, хăшпĕр колхозсенче бригадăсемпе звеносем туса илнĕ тырпула тивĕçлипе шута илсе пымаççĕ-ха. Çавнашкал колхозсенчи руководительсем çак ответлă ĕç çине çиелтен пăхнипе бригадăсем пухса кĕнĕ тырпула уйрăмăн шута илессине организацилемен. Пăрачкав районĕнчи «Восход» колхозра тата Шупашкар районĕнчи «Красин», «КИМ» колхозсенче бригадăсем пухса кĕртнĕ тырпула шута илмесĕрех пĕрлештерсе янă. Çапла тунă пирки колхозниксем вăйлă тырпулшăн çăвĕпе тăрăшса ĕçленин результачĕсене уйрăмăн палăртма çук. Çакă ĕнтĕ колхозниксен ĕçлес хастарлăхне пӳлсе пыни пулать.

Çак йăнăша тӳрлетме халь кая юлман-ха, ăна халех тӳрлетме васкамалла. Çĕрĕç оргăнĕсенчи работниксен бригадăсем тата звеносем туса илнĕ тырпула уйрăмăн шута илсе пырассине тата учет ĕçне тивĕçлипе йĕркелеме куллен пулăшса тăмалла.

Тырпула шута илессине тĕрĕс организацилени—колхозри обществăллă хуçалăха тĕреклетмелли тĕп меслет пулса тăрать. Звенора, бригада итемĕ çинче, обществăллă хранилищĕсенче—пур çĕрте те кашни килограмм тырра, пахча-çимĕçе тата ытти продуктсене çирĕп йĕркепе шута илсе пымалла.

Колхозника вăл ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕ тăрăх çеç мар, ĕçĕн результатне шута илни тăрăх тӳлемелле. Кам колхоза ытларах усă кӳнĕ, вăл ялхуçалăх продукцисене те, укçа-тенкĕ те ытларах илме тивĕç.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇĂН ГЕРОЙĔСЕМ. **Укерчĕк çинче:** Хĕрлĕ Çар командирĕсен группи. Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн вĕсене Совет Союз Геройĕн званине панă. Сулахайран сылтăмалла: батальоннăй комиссар **К. Н. Осипов,** майор **А. А. Ложечников,** полковник **И. М. Некрасов,** старший лейтенант **Н. М. Чепурной** тата старший лейтенант **С. Ф. Мошковский.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче противникăн 20 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 9 самолет пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем икĕ кун хушши пынă вăйлă çапăçура противника чылаях вăйлăн пырса çапнă. Çапăçу хирĕ тăшман салтакĕсен виллисемпе, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ танкĕсемпе тата орудийĕсемпе витĕннĕ. Икĕ кун хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 2700 çынна çити вилнĕ тата 500 çын тыткăна лекнĕ. Пирĕн чаçсем противникăн тĕрлĕрен калибрлă 41 оруди, 16 противотанковăй тупă, 17 миномет, 92 пулемет, темиçе танк тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Фронтăн Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче Кондратенко капитанăн подразделенийĕнчи боецсем нимĕçсен 12 танкне, 8 бронемашинине пĕтерсе тăкнă тата хĕçпăшал нумай тытса илнĕ.

* * *

Икĕ кун хушшинче пирĕн истребительсем Эзель утравĕ çийĕнче противникăн 10 самолетне персе антарнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи К. районĕнче пирĕн самолетсен группи тăшманăн мотомехвойскисем çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Пырса тапăннипе Германин 10 орудине, зенитнăй артиллерин 3 точкине, боеприпассем тиенĕ 35 автомашинине, çар снаряженийĕ тиенĕ утлă пысăк обозне, нимĕç пехотине пĕр ротăна çити тата кавалери взводне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Чернигов облаçĕнчи партизансем сентябрĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче 11 кĕпере сирпĕнтерсе янă, нимĕçсен 19 танкне, 6 бронемашинине тата боеприпассем тиенĕ 69 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Партизансен отрячĕсем противникăн темиçе орудине, нумай станковăй пулемечĕсене, 98 мотоциклне тытса илнĕ е стройран кăларнă, горючи тултарнă 12 цистернăна тата артиллери снарячĕсем усракан 2 склада çунтарса янă. Çак вăхăт хушшинчех партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 450 çын ытла вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче юлашки кунсенче нумаях пулмасть Францирен Хĕвелтухăç фронтне илсе килнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен пысăк группине тыткăна илнĕ. Иывăр артиллери полкĕнчи лейтенант Эрнст Либер çапла кăтартса панă: «Иывăр орудисен пирĕн батарейи 1941 çулхи çулларанпа Ла-Манш çыранĕнче Ле-Трепорта вырнаçса тăнă. Сентябрь уйăхĕн малтанхи числисенче пирĕн батарейăри йывăр орудисене пурне те платформăсем çине тиерĕç. Çав орудисем вырăнне çĕрле кивелсе кайнă тупăсене вырнаçтарса лартрĕç, вĕсене эпир Бельгире тата Голландире тытса илнĕ пулнă. Çул çинче эпир çавнашкалах Хĕвелтухăç фронтне илсе каякан батарейăсене нумай тĕлпултăмăр. Çакă ĕнтĕ вăл Францире пуринчен ытларах зенитнăй артиллери хăварнине пĕлтерет, анчах та çавăнта хăварнă зенитнăй артиллери те чылаях вăйсăрланнă. Полевой тата крепость артиллерине илес пулсан, ун пекки вара унта питĕ сахал юлчĕ».

51-мĕш пехотнăй полкри салтак Гейнц Кениг пĕлтернĕ: «10 кун каялла кăна мана салтаксем тиенĕ эшелонпа Валонсьенран Хĕвелтухăç фронтне илсе килчĕç. Уйăх çурă каярах пирĕн гарнизонри салтаксенчен автоматсене тата юрăхлă винтовкăсене пурне те пуçтарса илчĕç те, унăн вырăнне кивĕ винтовкăсем парса хăварчĕç. Пирĕн салтаксем çав винтовкăсене «чукмарсем» теççĕ. Францири хуласенче нимĕçсен нумайĕш чаçĕсем халĕ çавнашкал «чукмарсемпе» хĕçпăшалланнă». Нимĕçсен 416-мĕш пехотнăй полкĕнчи ефрейтор Бруно Бечер çапла кăтартса панă: «Августăн çур уйăхĕ çитиччен эпĕ тата манăн нумай юлташсем Çурçĕр Францире Алонсон гарнизонĕнче службăра тăнă. Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн ротăри салтаксене 100 çын ытла Хĕвелтухăç фронтне илсе кайрĕç. Эпир Хĕвелтухăçнелле тухса килнĕ кун Валонсона аманнă 30 салтака илсе пычĕç, гарнизонри службăна вĕсен туса пымалла пулать».

* * *

Данире, Германи çарĕ валли хатĕрлекен апат-çимĕç промышленноçĕн завочĕсенче сентябрĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче саботаж тата диверси тунисен хисепĕ уйрăмăнах ӳссе кайнă. Копенгагенра тата Оденсра нимĕçсен склачĕсенче пушарсем пулнă пирки спирт, сахăр тата аш-какай консервисен пысăк запасĕсем пĕтнĕ, Ольборгри эрех тăвакан заводра взрыв пулнă, çавăн хыççăн хатĕр продукци складĕнче пушар пуçланнă. Ĕç тухăçлăхĕ палăрмаллах чакни тата продукцие юриех пăснисем пур предприятисенче те палăраççĕ.

Германие яракан продукцие юриех пăснисем нумай пулнине нимĕçсен Данири фашистла пичечĕ те пытарса тăма пултараймасть. Çак кунсенче Германие илсе пынă сахăра нумайĕшне юриех йĕпетнĕ пулнă тата тăварпа хутăштарнă. Сентябрь уйăхĕн 15 кунĕ хушшинче кăна нимĕçсем валли чугунçул тăрăх илсе пынă пăсăлнă консервăсем тиенĕ составсем темиçе те пулнă. Çакна май Германи влаçĕсем сахăр тата консерва тăвакан заводсенчи рабочисем хушшинче нумай çынсене арестленĕ. Рабочисене арестленине ответлесе, Германи çарĕ валли чугунçул тăрăх сахăр тата консервăсем турттарса каякан состава Данири патриотсем ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Çĕршыври малта пыракан колхозсемпе совхозсем килес çулхи тырпул валли çирĕп никĕс хурса хăварас ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ. Колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсем анлăн сарăлса кайрĕç. Краснодар крайĕнчи Усть-Лабински районра 20 пин гектара яхăн сухаланă та ĕнтĕ. Çак районри 10 колхоз кĕрхи çĕртме тăвас плана тултарнă, халĕ планран ирттерсе сухалаççĕ. Фрунзе ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем планран ирттерсе 50 гектар, Буденный ячĕпе тăракан артельри колхозниксем—200 гектар сухаланă. Трактористсем ĕçри паттăрлăхăн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ. Тракторист Ефим Цымбалов кунне 1,5—2 норма тултарса пырать. Сезон валли панă задани тăрăх 77 гектар сухалас вырăнне, вăл кĕрхи çĕртмене 170 гектар сухаланă та ĕнтĕ. Тракторист Степан Жуковский сезонра кĕрхи çĕртме тума хăйне панă заданине тултарнă хыççăн татах 83 гектар сухаланă. Куйбышев облаçĕнчи Ишуткински машинно-тракторнăй станцинчи трактористсем Калашинпа Вертянкин дизельнăй тракторсем çинче ĕçлесе норма тăрăх 12 гектар сухалас вырăнне кулленех 15—17 гектар сухалаççĕ. Чкаловск облаçĕнчи Петровски машинно-тракторнăй станци кĕрхи çĕртме тумалли çĕр лаптăкĕшĕнчен чылай пайне тракторсемпе çĕрле ĕçлесе сухаланă. Чкаловски районри «Колос» ялхуçалăх артелĕ кĕрхи ака планне планран ирттерсе тултарнă тата кĕрхи çĕртмене 250 гектар ытла сухаланă та ĕнтĕ.

Октябрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Коломийцев полковникăн чаçĕсем фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсен икĕ полкне хыттăн пыра-пыра çапнă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.200 çын ытла вилнĕ тата темиçе пин çын аманнă. Пысăк трофейăсем тытса илнĕ. Полкăн штабне çĕмĕрсе тăкнă, Германи командованийĕн хаклă документсене тытса илнĕ.

* * *

Вавринчук капитанăн сапернăй батальонĕ тунă миннăй заграждениeсенче, фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче, противник 10 танк, 2 автомашина тата салтаксемпе офицерсене 40 çын çухатнă.

* * *

Шевцов капитанăн группи фронтăн Хĕвеланăç енче тăшманăн тылĕнче нумай вăхăт çапăçнă хушăра нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3 пин çын ытла, 32 танк тата нумай автомашинăсем пĕтерсе тăкнă. Витебск—Смоленск тата Минск—Смоленск çулĕсем çинче кăна группа нимĕçсен 17 транспортне çĕмĕрсе тăкнă. В. районĕнче «СС» батальона çапса аркатнă тата 13 станковăй пулемет тытса илнĕ.

Летчик-истребитель капитан Городничев сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ильмень кӳлли районĕнче А. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ хăюллăн çапăçать. Отрядри боецсем икĕ уйăх хушши боевой операцисем туса пынă вăхăтра нимĕçсенне 42 автомашина, 14 мотоцикл тата 24 велосипед пĕтерсе тăкнă, 14 кĕпере взрыв туса çĕмĕрнĕ тата 17 вырăнта противникăн полевой телефон çыхăнăвне пăснă. Фашистсене хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче партизансем темиçе çĕр салтакпа офицера вĕлернĕ тата амантнă. Нимĕçсен чаçĕ вырнаçнă яла çак кунсенче партизансем хăюллăн пырса тапăннă. Противник вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, партизансем ял патне çĕмĕрсе кĕнĕ те, ăна виçĕ енчен вут чĕртсе янă. Урамсенче хĕрӳ çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕçсем çапăçу хирне хăйсен салтакĕсен 87 виллине тата нумай хĕçпăшалне пăрахса хăварса, каялла чакнă.

А. юлташăн отрячĕпе юнашарах С. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ те гитлерла бандитсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешет. Отряд пуринчен ытла рабочисенчен тăрать. Партизансем пĕр уйăхра нимĕçсен 116 салтакне тата 8 офицерне вĕлерсе пĕтерсе, противникăн 39 грузовой тата 3 çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енче пулнă çапăçусенче пирĕн чаçсем нимĕç çарĕн тĕрлĕрен штаб документсене тытса илнĕ. Приказсенче, циркулярсенче тата донесенисенче Германи войскисем Хĕвелтухăç фронтĕнче тӳссе пыракан йывăрлăхсем çинчен каласа панă. Германи çарĕн главнăй квартирмейстерĕ циркулярсенчен пĕринче çапла çырать: «Нимĕç çарĕ çĕршывра питех те сахал выльăх-чĕрлĕх, тупнă условисенче, тата ытла та сахал юлнă консервăсене перекетлессине шута илсе, чаçсен пур мерăсене те йышăнса вырăнтах продовольстви шыраса тупма тивĕçлĕ».

Нимĕçсен 30-мĕш пехотнăй дивизи командирĕн 128-мĕш №-лĕ распоряженийĕнче çапла каланă: «Чугунçул транспортĕнчи пысăк йывăрлăхсене пула, çавăн пекех питĕ те инçетре тăнине тата çулсем начаррине кура çарсене татти-сыпписĕрех снабжени парса тăрассине организацилеме май çук. Мĕнпур чаçсенчен çакна ыйтмалла: хăйсем енчен пур средствăсемпе те тата майсемпе те усă курмалла, çапла тунипе транспорта пушатмалла».

Нимĕçсен 126-мĕш дивизин командирĕ хăйĕн приказĕнче намăса пĕлмесĕр офицерсене уççăнах çапла вĕрентет: «Кашни çар чаçĕн пĕрремĕш заповечĕ—хăйсем тытса илнĕ çĕршыв шутĕнчен пурăнасси пулмалла». Нимĕçсен 16-мĕш çарĕн 45-мĕш №-лĕ приказĕнче Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем командованин çакăн пек распоряженине илнĕ: «Кирек мĕнле средствăсемпе те пулсан тĕрлĕ йышши тир тата ăшă тумтир тытса илмелле».

* * *

Çамрăксен фашизма хирĕçле Мускаври митингĕ чĕнсе калани совет çамрăкĕсен нумай миллионлă речĕсенче патриотла çĕнĕ çĕкленĕве вăйлатса ячĕ. Алтай крайĕнчи 170 пин çамрăк патриотсем çĕршыв оборонин фончĕ валли воскресник тухнă. Барнаулри депора ĕçлекен çамрăксем çак кун 2 паровоз юсанă тата 75 вагонăн буксисене тӳрлетнĕ. Попов юлташăн котельщиксен бригади нормăна 320 процент тултарнă. Ребрихински районри Беловски ялсоветĕнчи çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем воскресникре 800 яхăн ĕçкунĕ тунă. Вĕсем ĕçлесе илнĕ средствăсене оборона фондне панă.

Л. М. Каганович ячĕпе тăракан чугунçул çинче пулса иртнĕ воскресникe çамрăк железнодорожниксем 16 пин çын хутшăннă. 6 паровоза, 22 стрелочнăй поста юсанă, юр тытакан 850 щита хатĕрленĕ тата юсанă, красноармеецсен семьисем валли 289 кубометр вутă хатĕрленĕ, 1250 тонна тимĕр-тăмăр пухнă. Камышлов станцин вагоннăй участокĕнчи слесарьсем Наумовпа Шестаков юлташсем çак кун кашниех нормăна 380 процент тултарнă. Нижний Тагилри депо слесарĕ Березова юлташ тăватă норма тултарнă. Калмык республикинче пысăк воскресник пулса иртнĕ. Калмык АСС Республикинчи пĕр Лагански районра кăна воскреснике 10.000 çын ытла хутшăннă.

Совет авиацийĕ тăшмана атакăлать

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ЕНĔ, сентябрĕн 29-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Çак кунсенче лейтенант Поздняков тата кĕçĕн лейтенантсем Маджаров, Бут тата Берлов хăйсен самолечĕсене палăртнă тĕллевсем патне илсе кайнă. Вĕсене хирĕç «Мессершмитт-109» йышши 3 самолет вĕçсе тухнă.

Совет летчикĕсем боевой разворот тунă та, çапăçăва ыткăннă. Кĕçĕн лейтенант Берлов тĕл пенипе тăшманăн пĕр самолечĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. Кĕске çапăçу хыççăн фашистсен тепĕр икĕ машинине те пĕтерсе тăкнă.

* * *

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ЕНĔ, сентябрĕн 29-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн авиаци Н-ски участокра активлăн çапăçнине пула противник чылаях çухатусем тӳсет. Штурмовиксемпе бомбардировщиксем пенипе пĕр кун хушшинче кăна противникăн 115 автомобильне, 6 бронемашинине, 5 танкне, артиллерин 4 батарейине пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллерин 5 точкине путарнă. Противник пехотине 3 батальона яхăн салатса ярса пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсем 8 Самолет çухатнă. Забелинпа Лысенко юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисенчи летчиксем уйрăмах палăрнă.

Комсомолецсемпе комсомолкăсем!

Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем пухас ĕçе организацилĕр!

КАНАШ. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем хаваслăн параççĕ. Яманкасси ялсоветĕнчи колхозниксем 63 тир, 58 килограмм çăм, Сиккасси ялсоветĕнчи колхозсен членĕсем 77 тир, 17 килограмм çăм, Асхва ялсоветĕнчи ĕççыннисем 59 тир тата ытти ăшă япаласем панă.

«Авангард» артелĕн правлени председателĕ Васильев пĕр кĕрĕк пиншак, ăшă костюм, мулаххай, унăн заместителĕ пулса ĕçлекен Степанов тăлăп, пĕр мăшăр чулха, пĕр мăшăр тăла пачĕç.

Т. ИВАНОВ.

* * *

Учительсем тата пуçламĕш шкулсемпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюз членĕсем Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри рабочисен чĕнĕвне ăшă кăмăлпа кĕтсе илсе, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса пама тытăнчĕç. Шупашкар районĕнчи Шемшерти вăтам шкул директорĕ Петров юлташ 2 тир, 2 мăшăр носки, пĕр минтер пичĕ, пĕр мулаххай тата пĕр алшăлли панă. Çав шкулти учитель Д. Петров юлташ 4 тир, пĕр мăшăр çăматă панă.

Кӳкеçри вăтам шкулти учительница Александрова юлташ икĕ фуфайка, пĕр мăшăр носки, пĕр мăшăр алшиш, пĕр мăшăр ăшă кĕпе-йĕм тата шлем айĕнчен тăхăнмалли çăмран çыхса тунă ăшă калпак панă. Çакнашкал примерсем татах та нумай. Халĕ районри учительсемпе шкулсенче ĕçлекенсем пурĕ 470 тир, 465 мăшăр алшиш, 400 мăшăр çăмноскисем, 189 мулаххай, 36 мăшăр çăматă, 167 алшăлли, тата ытти ăшă тумтирсем те чылай пухнă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас ĕç учительсем хушшинче сарăлсах пырать.

С. СИМОНОВ.

Халăх пулăшăвĕ

Çăматăсем, алшиш, чулха, кĕпе-йĕм, ура тăли, мулаххайсем, тирсем, фуфайкăсем тиенĕ лавсем кашни кунах Кӳкеçе пыраççĕ, çав япаласене Хĕрлĕ Çар валли ярса пама районти комиссин складне леçеççĕ.

...Колхозница алшиш çыхать. Вăл чи лайăх çăма таптарса арланă та, хăйĕн савнă упăшкийĕ е тăван ывăлĕ валли пек тăрăшса, ăшă кăмăлпа алшиш çыхса хатĕрлет. Хĕрлĕ Çар валли çăматă йăвалакан ватă колхозник те, ăшă кĕпе çĕлекен комсомолка та çавăн пекех тăрăшса ĕçлеççĕ. «Пĕтĕм вăя фронта пулăшма, урнă тăшмана часрах çĕнтерме!» Çак шухăшпа тулнă халь кашни патриотăн чĕри.

— Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем пухасси çинчен илтсенех, эпĕ ятарласах çăм арларăм та, чулха çыхма тытăнтăм,—тет Паçпак ялĕнчи 56 çулхи колхозница Евдокия Кузьмина. Вăл колхозра ăшă япаласем пухакан комиссине вĕрçĕнĕ чулха леçсе парсан, хăй çыхнă чулха Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли юрăхлă пулнăшăн хытă савăнчĕ.

Çак ялти 78 çулхи колхозник Фома Сергеев 3 тир пырса пачĕ. Унăн 70 çулхи арăмĕ алшиш çыхма тытăнчĕ.

Шăнкасри 77 çулхи колхозница Минадора Иванова Хĕрлĕ Çар валли тир, пĕрер мăшăр чулха тата пир тăла пачĕ.

Ăшă япаласем пухас ĕçре колхоз активĕ пример кăтартать.

Соляново ялсоветĕнчи «Правда» колхоз председателĕ Гаранин юлташ, ялсовет депутачĕ, Хĕрлĕ Çар валли маткă хурса çĕленĕ пиншак, пĕр мăшăр çăматă тата тир пачĕ.

«Самолет» колхоз председателĕ, граждăн вăрçин участникĕ Андреев юлташ 5 тир, мулаххай, пĕр мăшăр пир тăла пачĕ.

Заводская ялсоветĕнчи «Красный флот» колхоз членĕсем районри комиссине 76 тир, 5 килограмм çăм, 2 мăшăр çăматă, 15 кĕпе леçсе пачĕç.

Карандайри «Дружба» колхоз ферми 17,5 килограмм çăм панă.

Якимовăри «Вторая пятилетка» колхоз обществăллă фондран ăшă япаласем туянма 400 тенкĕ укçа уйăрнă, колхоз çăмĕнчен çыхнă 10 мăшăр кĕске чулха, 10 мăшăр алшиш парать. Ку колхозри колхозниксем 31 тир, 11 кĕпе, 7 мăшăр кĕске чулха, 3 мăшăр çăматă, 2 фуфайка, 8 мулаххай, 2 кĕрĕк пиншак пухнă.

Сентябрĕн 23-мĕшне районри комиссине 2115 тир, 50 мăшăр çăматă, 145 мăшăр алшиш, 190 мăшăр кĕске чулха, 227 мăшăр çăм тăла, 900 мăшăр пир тăла, 99 мулаххай, 207 килограмм çăм, 402 алшăлли, 49 çыхнă кĕпе, 105 мăшăр аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем пухăнна.

Т. ЛОГИНОВ.

СССР, Великобритани тата США представителĕсен конференцийĕ йышăннă решенисем пирки ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). СССР, Великобритани тата США представителĕсен конференцийĕн итогĕсене Англири пичет анлăн çутатса пырать. Хаçатсем конференци решенийĕсене ырлаççĕ тата гитлерла Германине çĕнтерес ĕçе организацилес тĕлĕшпе çав решенисем пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртаççĕ.

«Дейли геральд» тата «Дейли экспресс» хаçатсем, çав конференци халиччен пулнă конференцисенчен чи кĕске те чи ăнăçлă конференци пулса тăрса историне кĕрет, тесе çыраççĕ. Çавнашкал пысăк вырăн йышăнса тăракан конференци пурнăçри питех те кирлĕ ыйтусем тăрăх çавăн пек хăвăрт килĕшӳ туса вĕçленни халиччен нихăçан та пулман-ха, тесе çырать «Дейли геральд» хаçат хăйĕн умстатьинче. Пирĕн хăвăрт та татăклăн ĕçлемелле.

«Ньюс кроникл» хаçат хăйĕн умстатьинче, Мускаври конференци тен эпир халь шухăшланинчен те пысăкрах вырăн йышăнса тăма пултарĕ, тесе палăртать.

Рейтер агентствин Мускаври специальнăй корреспонденчĕ хăйĕн пĕлтерĕвĕнче, виçĕ державăн Мускаври конференцийĕ хăйĕн ăнăçлăхĕпе рекордлă пулса тăрать, тесе паллă тăвать. Юлашки çулсенче пулса иртнĕ конференцисенчен пĕри те çавăн пек кĕске вăхăтра çавăн чухлĕ паха результатсем паман пулĕ, тесе çырать вăл.

США

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). СССР, Великобритани тата США представителĕсен конференцийĕн ĕçĕ çинчен Америкăри пичетре тĕп вырăна хурса çыраççĕ. «Крисчен сайенс монитор» хаçат, гитлерла Германие хирĕç ССР Союзĕ туса пыракан кĕрешӳ Америка халăхĕшĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, тесе пĕлтерет. Гитлера хирĕç кĕрешекенсен пурин те пĕрлешсе пĕрлĕхлĕ ĕç туса пыма кирлине ăнланса илмелле,—тесе çырать хаçат.—Америка Российăна пулăшни вăл Америка интересĕсемшĕн тунă ĕç пулса тăрать. Çавăн пек пулăшни вăл Америка континентне агресси пырса çапассинчен аякра тытса тăма тата мĕнпур тĕнчере ирĕклĕхе сыхласа хăварма май парать.

Паян ирхи хаçатсем виçĕ державăн Мускаври конференцийĕ хупăнни çинчен пĕлтернине хурăнмалла çĕре пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çав пĕлтерĕве пĕрремĕш страницăра çакăн пек заголовокпа пичетлесе кăларнă: «Мускаври калаçусем ССР Союзне пулăшу парас ĕçе васкатмалла килĕшӳ тунипе мăлтан палăртнинчен икĕ кун маларах вĕçленчĕç. Российăн кашни ыйтăвне США-па Англи практикăллăн пурнăçа кĕртĕç, çакăн вырăнне Российăран хĕçпăшал тăвас ĕçе нумай пысăклатма май паракан чĕртаварсем туянĕç».

КАНАДА

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Канадăри пичет виçĕ державăн Мускаври конференци решенийĕсем пирки хавхалануллăн çырать.

Эдмонтонра (Альберт провинцийĕ) тухакан «Бюллетень» хаçат, Мускаври конференци вырăссем нацистсене хирĕç ăнăçлăн тăрса çапăçма пултарассине Англипе США пĕтĕмĕшпех шанса тăнине кăтартса парĕ, тесе палăртать. «Альбертан» хаçат (Альберт провинцинчи Калгерире тухать) вырăссем ĕнтĕ нацистсен вăрçă машинине хавшатса вăйсăрлатрĕç те, тесе пĕлтерет. «Союзниксен обязанноçĕ—çине тăрса çапăçса, тоталитарнăй агрессора пĕтерсе тăкасси»,—тесе çырать хаçат.

«Оттава ситизен» хаçат çапла çырать: Российăна кирлĕ хĕçпăшала çителĕклĕн парса тăма палăртакан килĕшӳре Канада пысăк вырăн йышăнса тăма пултарать. Канадăри производствăн вăйне анлăн сарма пур майсем те çителĕклĕ.

Гитлерла палачсем чех халăхне пĕтереççĕ

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Гитлеровецсем чех халăхне хирĕç юнлă террор туса пыраççĕ. Ĕнер нимĕçсем Чехипе Моравин премьер-министрне Элиаша, гестапо çак кунсенче арестленĕскере, асаплантарса вĕлермелле приговор йышăннă.

Дивизионнăй генерал Элиаш Чехословаки çарĕн кадрти офицерĕ. Гитлеровецсем хăй вăхăтĕнче премьер туса çирĕплетсе Элиаш авторитечĕпе усă курса, ăна хăйсен тарçи туса хума шутланă. Анчах çак план пĕтĕмпех арканса кайнă. Нимĕçсем чехсем хушшинче сутăнчăк çынсене тупайман пирки, Чехословакире хăйсем пуç пулнине чăрсăр юнлă террорпа тытса тăрасшăн.

Германи хаçачĕсем Чехословакире асаплантарса вĕлернисем çинчен пĕлтерӳсем пичетлесе кăлармаççĕ. Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕн сăмахĕсем тăрăх, «Чехословакире персе вĕлернĕ çынсем никама та пăхăнса тăман чех государствине çĕнĕрен ура çине тăратма хăтланнă».

Чехсен ытти группи, нимĕçсем пĕлтернĕ тăрăх, Германие хирĕç кĕрешме хĕçпăшал пухассине организациленĕ. Хаяр репрессисене пăхмасăрах, чех рабочийĕсем Германин çар заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен заводсенчи производствăна пур мерăсемпе те чарса пыраççĕ.

«Сэн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакин Лондонри правительствин министрĕ Лихнер, халĕ США-на килнĕскер, интервью панă, унта вăл Чехословакири халăха пăлханусем нацистсен войскисене Хĕвелтухăçне куçарассине йывăрлатас пирки питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, тесе каланă. Лихнер малалла çакна кăтартнă: Чехословакин Лондонри правительстви илнĕ сведенисем тăрăх, совет фронтне ăсатакан çар эшелонĕсене взрывсем тунисем пулса пыраççĕ, Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнма мобилизациленĕ чехословаксем тарни палăрса пырать. Рабочисем орудисемпе бомбăсен питех те кирлĕ чаçĕсене пăсаççĕ, çар завочĕсенче взрывсем тăваççĕ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕш. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: сентябрĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Англи истребителĕсем Ла-Манш проливĕпе Çурçĕр Франци çыранĕ çинче операцисем туса иртнерĕ. Шербург çывăхĕнче суту-илӳ тумалли хĕçпăшаллантарнă икĕ парохода атакăланă, вĕсенчен пĕрне сиенленĕ. Пароход çинче пушар тухнă.

Англин çыранри оборона самолечĕ Норвеги çыранĕ çывăхĕнче пĕр судно çине торпеда пăрахса тĕл лектернĕ.

Октябрĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Гамбургпа Штеттин çине çĕнĕрен вĕçсе пырса тапăннă.

Англин çар министерстви кăларнă коммюникере вăрçă пуçланнăранпа зенитнăй артиллери Англи çинче Германин 600 самолетне персе ӳкернĕ, тесе каланă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германи авиацийĕ, çанталăк уяр тăнипе усă курса, октябрĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи çинче юлашки вăхăтрисенчен пысăкрах активлăх кăтартнă. Гри-нэре (Францин Ла-Манш проливĕнчи çыранĕ) вырнаçтарса лартнă инçе перекен орудисенчен Англи çыранне хаяррăн пенĕ. Англин Çурçĕр-Хĕвелтухăç çыранĕнчи икĕ хула çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă, анчах жертвăсен шучĕ пысăк мар. (ТАСС).

Авиацин хĕвеланăç фронтĕнчи çухатăвĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕш. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрьте Англи авиацийĕ противникăн 212 самолетне пĕтерсе тăкнă. Англи авиацийĕ пĕтĕмпе 211 самолет çухатнă.

(ТАСС).

Англин çар расхочĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин кулленхи расхочĕсем 13 миллион фунт стерлинг пулса пыраççĕ, вăл шутран 11 миллионĕ çара валли кайса пырать. (ТАСС).

Румынин аманнă салтакĕсем нумайланни

ЖЕНЕВА, октябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Базельри «Национал цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Румынин аманнă салтакĕсем, Одесса патĕнче çапăçнăскерсем, юлашки вăхăтра Румыни хулисене питех те нумай килсе тулнă. Румыни влаçĕсем аманнисене пуринчен ытла çĕршывăн хĕвеланăç пайĕнчи хулисене ăсатаççĕ.

Канадăра Польша войскисене хатĕрлеççĕ

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 2-мĕш. «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн Канадăри войскисен главнокомандующийĕ генерал Дух çапла пĕлтернĕ: США-ра тата Канадăра пурăнакан поляксене пухса тунă темиçе чаçа Польшăн Канадăри командирĕсем ертсе пынипе хатĕрлесе çитерне ĕнтĕ, вĕсем Англине пырса çитнĕ. Генерал Дух, унăн шухăшĕ тăрăх, поляксене вербовка тăвасси малашне те пулса пымалла, тесе каланă.

Канадăра Польша добровольцĕсене тинĕс-çар флочĕ, авиаци тата моторизованнăй чаçсем валли хатĕрлеççĕ. Вооружение арендăна е кивçен парса тăрасси çинчен кăларнă закон йĕркипе поляксене пулăшасси çинчен США çар министрĕпе Стимсонпа калаçнă хыççăн генерал Дух Канадăна тухса кайнă. (ТАСС).

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер общинăсен палатинче çар валли çĕнĕрен хушса пĕр миллиард фунт стерлинг ассигнаци парас ыйтăва сӳтсе явнă, вăрçă лару-тăруне обзор туса премьер-министр Черчилль палатăра сăмах тухса каланă.

Черчилль çĕнĕ çул пуçламăшĕнче Гитлер тунă заявленине асăнлтернĕ, ун чухне Гитлер çапла каланă пулнă: çуркунне шыв айĕнче тата сывлăшра вăйлă вăрçă пуçланать, Германия татăклăнах çĕнтерӳ тăвать, мартпа апрельте «противник нихăçан та кĕтмен» тинĕс вăрçи пуçланать, тенĕ. Нимĕçсем чăнах та Англи судоходствине хирĕç подводнăй лодкăсемпе тата инçете вĕçекен самолетсемпе ĕлĕкхинчен нумайрах усă курчĕç. Анчах та хирĕçле мерăсене вăхăтра тата сарлакан йышăнни питех те ăнăçлă пулчĕ. Англипе союзниксен флочĕн, çавăн пекех тата нейтральнăй çĕршывсен флочĕсен июльти, августри тата сентябрьти çухатăвĕсем апрель, май тата июнь тапхăрĕнчи çухатусен виççĕмĕш пайĕ чухлĕ кăна пулчĕç.

Çак тапхăртах Германипе Итали флочĕн çухатăвĕсем, унччен хи кварталпа танлаштарсан, пĕрре çурă хут ӳссе кайнă. Англия боеприпассем тиенĕ пароходсене сахал çухатрĕ. Хальхи вăхăтра Англин продовольстви запасĕсем вăрçă пуçланиччен хинчен нумайрах тата пĕр çул та сакăр уйăх ĕлĕк пулнинчен чылай ытларах. Халĕ Америкăра тăвакан çĕнĕ суднăсен нумай йышĕ строя кĕме тытăнать, вĕсем тата Англин хăйĕн хушăнса пыракан суднисем Англине хăй умĕнче 1942 çулта тăракан задачăсене татса пама май парĕç. Çакăнпа пĕрлех Черчилль шыв айĕнчи вăрçă вăйланассине кĕтмелле, тесе асăрхаттарса хăварнă.

Черчилль «пуласлăх стратегин» ыйтăвĕсене хускатнă май, çак ыйтусем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă пирки, хамăрăн плансене противник умĕнче уçса парас мар тесе, вĕсем пирки хăй уççăнах калама шутламаннине паллă тунă.

Черчилль малалла çакна палăртнă: Англин питĕ пысăк строительство тумалла е хальхи предприятисене çар валли ĕçлемелле туса майлаштармалла. Англире Россия валли танксем туса кăлармалли эрне халĕ çеç вĕçленнĕ, çак эрне çав танксене туса кăларакан рабочисемпе работницăсем хушшинче производствăллă çĕкленĕве хăпартса янă. Çак эрне хушшинче туса кăларнă танксем Англипе США Российăна ямалли вооруженин пĕр пайĕ çеç пулса тăраççĕ-ха. Черчилль çакна палăртнă: Англия пĕччен мар, унăн ĕçĕсене икĕ аслă халăх—Российăпа США пулăшаççĕ. Европăн чуралатнă çĕршывĕсенче халăхсен пăлханăвĕсем хăмленсе çĕкленеççĕ. Англипе США Совет Союзне материалсем енчен пулăшса тăрас ыйтăва хускатса, Черчилль çапла каланă: Англипе Америка делегацийĕсем хальхи вăхăтра Мускавра Совет правительствин руководителĕсемпе канашлаççĕ. Рузвельтпа эпĕ Атлантика океанĕнчен премьер Сталин патне хамăрăн посланине янăранпа иртнĕ вăхăтпа океанăн икĕ енче те усă курса татти-сыпписĕр активлăн ĕçлесе пынă. Англи представителĕсемпе вĕсен Америкăри коллегĕсем, эпир паянхи тапхăртан пуçласа малалла та уйăхран уйăха Российăна мĕн пама пултарнине йăлтах пĕлсе тăрса, Мускава кайрĕç. Эпир мĕн чухлĕ хĕçпăшал тата снаряжени ярса тăма пултарнине тата вăл хăй мĕне шанса тăма пултарнине пĕлсе тăма Совет правительствин право пур.

Россия яланлăхах вăрçма пултаракан пĕрремĕш класлă держава пулса юлтăр тесен, Англи халăхĕн питех те пысăк жертвăсем тӳсмелле, чи юлашки вăйĕсене шеллемелле мар. Эпир Совет Союзне танксем кăна мар, самолетсем те, алюминий, каучук, пăхăр, нефть, хальхи вăрçă валли кирлĕ ытти материалсем те ăсатса тăмалла, халĕ чылай пайне янă та ĕнтĕ. Çак ыйтусене пурне те халĕ Мускаври канашлура сӳтсе яваççĕ.

Иранри событисем çинчен сăмах тапратса, Черчилль çапла каланă: вырăс союзникпа çывăх контакт тытса пырса пĕр çын тенĕ пек çухатмасăр тата тĕлĕнмелле хăватлăхпа Тегеранран сиенлĕ усал элементсене кăкласа тăкнă. Черчилль Англин Вăтаçĕр тинĕсĕ çинчи, Хĕвелтухăçĕнчи тата Англинче хăйĕнче тăракан войскисене саламланă.

Англи авиацийĕ мĕншĕн Рим çине бомбăсем пăрахманни çинчен панă ыйту пирки Черчилль çапла каланă: иртнĕ çул итальянецсен Лондон çине бомбăсем пăрахма право пулнă пекех, англичансен те Рим çине бомбăсем пăрахма право пур. Çак операци вăрçă шăн вырăнлă та усăллă пулсан, Рим çине эпир мĕнле кирлĕ таран бомбăсем пăрахассинчен хăраса тăман пулăттăмăр.

Юлашкинчен премьер çапла каланă: халĕ çывхарса килекен хĕл Российăна Германи хĕсесси вăйсăрланассине пĕрре те пĕлтермест. Хĕл çывхарса килни Англи çине тапăнса кĕрес хăрушлăх иртсе кайнине нимĕн чухлĕ те пĕлтермест. Мĕнпур вăя хурса тăрăшни çеç, пĕрлĕхе çине тăрса тимленипе çыхăнтарни çеç Англине хăй участник пулса тăракан пĕтĕм тĕнчери пысăкран та пысăк драмăра хăйĕн рольне çителĕклĕ таран пурнăçа кĕртме пулăшĕ. Çак условисене пăхăнса пырăпăр, тесе шантарнă Черчилль.

Германи тылĕнчи тата фронтри шухăш-кăмăлсем

БЕРН, октябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Продовольстви енчен çĕршывра йывăрлăхсем пулнине тата фронтра нумай çухатусем тӳснине кура, Германи халăхĕ влаçсен политикипе хăй тарăхса çитнине уççăнах палăртма тытăннă. «Нейер винер тагблат» хаçат сентябрĕн 21-мĕшĕнче Германи командованийĕ Германи çарĕн çухатăвĕсем çинчен пĕлтернисене пур çĕрте те шанмаççĕ, тесе çырать. Германи командованийĕ пичетлесе кăларнă цифрăсене нумайĕш чăнчăн цифрăсем вырăнне шутласа йышăнманнине кăтартса, хаçат хăйĕн вулаканĕсене çапла ĕнентерме хăтланать: «халĕ пыракан вăрçăра иртнĕ тĕнчери вăрçăринчен сахалрах çухатусем пулаççĕ», тесе çырать. Унччен хаçат «тĕнчери вăрçă вăхăтĕнче кашни дивизин кулленхи çухатăвĕсем вăтам шутпа 100 çын пулнă» тесе çырнăччĕ.

Германи пресси «çисĕмле вăрçăн» гитлерла планĕсем хĕвелтухăçĕнче арканса кайнине Германи халăхĕн куçĕ умĕнче кирек мĕнле те пулсан тӳрре кăларас тесе, юлашки вăхăтра хĕвелтухăçĕнчи походăн йывăрлăхĕсем çинчен калаçма тытăнчĕ. «Фелькишер беобахтер» çулсем япăххи тата вăйлă çумăрсем пирки ӳпкелешет, «Берлинер берзенцейтунг»—Германи çарне снабжени парса тăрас ĕçри йывăрлăхсем çине, «партизансен кĕрешĕвĕ халран ярса тыни» çине кăтартса парать, «Дас рейх»—«СССР пек çĕршыва пĕр çу хушшинче çапăçса илеймĕн», тесе хуйхăрса йышăнать. Итали пичечĕ Германи хаçачĕсем хыççăн пырать. «Реляциони интернационали» хаçат сентябрĕн 14-мĕшĕнче хĕвелтухăçĕнчи йывăрлăхсем çинчен ятарласах статья пичетлесе кăларнă. «Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă йывăр ĕç пулса тăрать, çынсемпе материалсем енчен йывăр çухатусем тӳсме ыйтать» тесе çырать Итали хаçачĕ. Ку вăрçăн йывăрлăхĕсем çавтери пысăк пирки, хăшпĕрисен, хаçат каланă тăрăх, «туртасене каялла çавăрас» шухăш та сиксе тухать.

Халĕ урамсенче нумайĕшĕ тĕл пулсан пĕрне-пĕри «Хайль Гитлер» сăмахсемпе саламлама хăюлланманнинче те халăх тарăхни палăрса тăрать. Çак фактсене Геббельс хăй те ирĕксĕрех йышăннă. «Дас рейх» хаçатра сентябрĕн 28-мĕшĕнче Геббельс çапла çырнă: «Германире икĕ эрне ĕнтĕ çĕрулми çитмест, кофепе супăнь тата пирус çук, халăх çакна ответлесе пĕрне-пĕри «хайль» сăмахпа саламламасть».

Хĕвелтухăçĕнчи фронтра пулнă ютçĕршыв корреспонденчĕсем нимĕçсен салтакĕсем хушшинче хыттăн саралнă шанчăксăр шухăш-кăмăлсем çинчен каласа параççĕ. Салтаксем пур çĕрте те вăрçă йывăрлăхĕпе поход хаярлăхĕ çинчен кăна калаçаççĕ. Халĕ çеç палăртса хăварнă статьинче Геббельс: «Хĕвелтухăçĕнчи фронтран тăван çĕршыва миллионшар çырусем килеççĕ, вĕсенче поход йывăрлăхĕсем çинчен калаççĕ» тесе ӳпкелешсе çырнăччĕ. Швецири «Нурденс фрихет» хаçат Швецири пĕр наблюдателĕн статьине пичетлесе кăларнă, наблюдатель çапла çырать: Германия Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласанах Германи салтакĕ шанчăкне çухатрĕ, ĕненме пăрахрĕ. Вăл вăрçă вăраха кайнине, унта поражени тӳсме пултарнине пĕлсе тăрать. Ĕмĕчĕсене татнипе тата шанчăксене çухатнипе чун тăвăрланни, поражени хыççăн пулас йывăрлăхсенчен хăрани тата килĕсене таврăнассишĕн кулянса ӳкни—çаксем салтаксем хушшинче пуçпулса тăраççĕ. Авиаци, танковăй чаçсем тата подводнăй флот ытла та нумай çухатусем тӳсни Германи салтакĕсене хуйха ӳкернĕ. Командовани приказĕ нихăшне те хаваслантармасть. Ку кăна мар-ха, летчиксем вĕçме килĕшменнисем те пулаççĕ. Çакă ĕнтĕ çар пăсăлса кайнин малтанхи паллисене кăтартать. Германи çарĕн составĕ çынсем енчен хăвăрт начарланса çитнĕ. Çирĕм çулхи пилотсем тĕлпулаççĕ, вĕсен çӳçĕсем кăвакарнă, аллисем чĕтреççĕ. Вилнисен вырăнĕсене опытсăр летчиксем йышăнаççĕ». «Германин шăпи,—тет юлашкинчен наблюдатель,—нумай нимĕçсене хумхантарать. Германи салтакне пĕтĕм тĕнче кураймасть. Ыттисене мĕн чухлĕ усал тунине пĕлсе тăрса, нимĕçсем хăйсене таврăссинчен хăраççĕ».

Нимĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе пырса тапăнма хăтланни

Октябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен группи Мускав çине пĕччен-пĕччĕнĕн вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Зенитнăй артиллери пенипе тата çĕрлехи истребительсем тăшман самолечĕсене Мускав патне кĕртмен.

Нимĕçсен икĕ самолетне персе ӳкернĕ.

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентессине туса пыма профсоюзсене хутшăнтарасси

ВЦСПС Президиумĕ ССР Союзĕнчи граждăнсене пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентессине туса пырас ĕçе профсоюз организацийĕсене активлăн хутшăнма хушнă. Фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнсенчи профсоюз комитечĕсене çар комиссариачĕсемпе тачăн çыхăнма, вĕсене всевобуча организацилес ĕçре куллен практикăллă пулăшу парса пыма хушнă.

Культура çурчĕсенче, клубсенче тата хĕрлĕ кĕтессенче çар техникин темисем тăрăх тăтăшах докладсемпе консультацисем туса иртермелле, çарпа физкультура кĕтесĕсем организацилемелле. Вĕсем валли вĕренмелли винтовкăсем (макетсем), нагляднăй пособисем, литература çителĕклĕ таран тупса памалла.

Профсоюз организацийĕсен тата профсоюзсем çумĕнчи спорт енĕпе ĕçлекен общество совечĕсен чи лайăх физкультурниксенчен физкультура енĕпе ĕçлекен инструкторсем уйăрса памалла тата октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр ятарласа тунă программа тăрăх çарпа физкультура ĕçне вĕрентме физкультура инструкторĕсем валли семинарсем организацилемелле.

Октябрĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче профсоюз организацийĕсен пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси кашни уйрăм предприятире е учрежденире мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явма рабочисен тата служащисен пухăвĕсене туса иртермелле, «СССР граждăнĕсене пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен» Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă постановленине тĕплĕнрех пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. (ТАСС).

Всевобучăн малтанхи кунĕ Мускавра

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентессин малтанхи кунĕ Мускавра пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Совет патриочĕсем тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине, вăрçă ĕçне вĕренме тата боевой хĕçпăшала лайăх тытма тăрăшнине кăтартса панă.

Молотов ячĕпе тăракан заводри рабочисем, служащисем тата инженерно-техническии работниксем ирхине 6 сехетте 30 минутăра занятие пухăннă. Боецсем занятие хатĕр тăни çинчен панă рапорт çарти пек уççăн янраса кайнă. Комиссар Балясников юлташ боецсене вĕренӳ пуçланнипе тав тунă. Ун хыççăн строевой занятисем пуçланнă. Молотов ячĕпе тăракан завод Молотовски районра çар ĕçĕпе малта пыраканнисен шутĕнче хисепленет, унăн çар ĕçне вĕренмелли кăтартуллă пункчĕ пур.

6-мĕш номерлĕ хлебозаводри (Фрунзенски район) рабочисем çĕрлехи ĕç пĕтсен çар ĕçĕн занятийĕсене килнĕ. Строевой занятисем пуçланиччен Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленийĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калаçу пулнă. Вĕренӳн малтанхи кунĕ пысăк çитĕнӳпе иртнĕ.

Çар ĕçне вĕренесси Краснопресненски районăн предприятийĕсенче лайăх иртнĕ. «Пролетарский труд» заводра рабочисен кăнтăрлахи смени 6 сехетрен 8 сехете çитиччен, çĕрлехи смена 8 сехетрен 10 сехете çитиччен вĕреннĕ. Чирлисемсĕр тата ĕçрен пушанманнисемсĕр пуçне, 16 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ пур боецсем те пухăннă.

Мускавра всевобучăн малтанхи кунĕ çак ĕçе фабрикăсенче, заводсенче тата учрежденисенче малтанах лайăх хатĕрленнине кăтартса панă. Подразделенисене пур çĕрте те пухса çитернĕ, вĕсене ертсе пыма запасри опытлă командирсене уйăрнă.

(ТАСС).

Занятисем йĕркеллĕ пуçланчĕç

ИЕПРЕÇ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче каçхине 6 сехет тĕлне райвоенкомата тĕрлĕ çулхи çынсем йышлăн пухăнма тытăнчĕç. Черноречески вăрман пункчĕпе автобазăра ĕçлекенсем сборлăй пункта малтанах тата пысăк организованноçпа пырса çитрĕç. Çавăн пекех, «Кооплеспром» промартельре ĕçлекенсем те 50 çын пурте организованно пычĕç.

Вĕренекенсем пурте пуçтарăнса çитнĕ хыççăн райвоенком Андреев юлташ çар ĕçне вĕренес ĕç мĕнле йĕркепе пулса пымалли çинчен ăнлантарса панă. Ун хыççăн командирсемпе политработниксем çынсене подразделенисем тăрăх уйăрса йĕркелерĕç.

Район центрĕсĕр пуçне, çав кун виçĕ пунктра: Кировскинче, Ворошиловскинче тата Буинскра çар ĕçне вĕренме тытăннă.

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентессине район аван хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Çынсене пурне те малтанах тĕплĕн шута илсе тухнă. Командирсемпе политработниксен составне уйăрнă. Осоавиахим организацийĕсенчи тата шкулсенчи вĕренӳ хатĕрĕсемпе учебниксене пухса вĕренӳ пункчĕсен аллине панă. Комсостав валли семинарсем организациленĕ.

Районра вĕренӳ пункчĕсем 8 çĕрте пулаççĕ. Октябрĕн 3-мĕшĕнчен тытăнса вĕсенче пуринче те занятисем пуçланаççĕ.

В. АНДРЕЕВ.

* * *

СĔНТĔР. Оборонăн Государственный Комитечĕ пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен йышăннă постановленине районри ĕççыннисен митингĕсенче тата пухăвĕсенче пур çĕрте те сӳтсе-явнă. Çак постановленине ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн ырлаççĕ.

Районра çар ĕçне вĕренме тивĕçлисен списокĕсене сентябрĕн 30-мĕшне туса çитернĕ. Кашни группăна вĕрентме командирсене уйăрса çирĕплетнĕ, политруксене уйăрнă. Сентябрĕн 29—30-мĕшсенче командирсемпе политруксен семинарне иртернĕ.

Ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентме граждăн вăрçин участникĕсем активлăн пулăшаççĕ. П. Сергеев — граждăн вăрçинче Царицына хӳтленĕ çĕрте, Атласкин — çав вăхăтра контрреволюциллĕ бандăсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте çапăçнă колхозниксем халĕ çар ĕçне вĕрентекен командирсем пулса тăраççĕ.

Конкретлă, практикăллă вĕренсе пыма пособисене тупса хатĕрленĕ. Çар ĕçне вĕренме тивĕçлĕ çынсем вĕренӳ хатĕрĕсене хăйсем те тăваççĕ. Кăпас ялсоветĕнче 39 винтовка, Пушкăрт ялсоветĕнче темиçе пулемет туса хатĕрленĕ. Çатракассинче çар ĕçĕн кĕтесне организациленĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче — вĕренӳн малтанхи кунĕнче Мăн Сĕнтĕрти подразделенин занятийĕ 17 сехетре пуçланмалла пулнă. Ку подразделенине Шупуç, Ахманей тата Сĕнтĕр ялсоветĕнчи ĕççыннисем кĕреççĕ. И. Егоров (Шупуç), Мидиков, А. Воробьев, С. Замятин (Сĕнтĕр) тата ытти колхозниксем те 16 сехет тĕлнех оборона çуртне пухăнчĕç. Вĕсем пурте: часрах вĕренме тытăнасчĕ, теççĕ.

Вĕренекенсем пурте пĕр харăс пухăнчĕç, вырăнлă сăлтав пуррисем кăна занятие пырайман. Вĕренме пынисене командир М. Потапов юлташ оборона çурчĕ çумĕнчи усланкăна илсе тухрĕ те йĕркелесе тăратрĕ. Вара строевой занятисем пуçланчĕç. Çар ĕçне вĕренекенсем хушшинче дисциплина çирĕп пулни палăрчĕ.

Каçхине вĕренекенсен пухăвĕ пулчĕ. Унта районри çарĕç комиссариатĕнче ĕçлекен юлташ пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен, малашне занятисем мĕнле пулса пырасси çинчен доклад туса пачĕ, дисциплинарнăй уставпа паллаштарчĕ.

Ку подразделенинче вĕренекенсем Моркавăшри подразделенине социализмлă ăмăртăва тухма чĕнчĕç, кашни вунă кун хушшинче пĕрер номер «Стрелок» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăма йышăнчĕç.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Çар ĕçне вĕрентме ялсенче 7 пункт, хулара пĕр пункт организацилерĕмĕр. Октябрĕн 1-мĕшĕнче нумай пунктсенче занятисем вăхăтра пуçланнă.

Занятире стройпа çӳреме вĕрентнĕ, дисциплинарнăй устав вуласа панă, пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентес задачăна тата унăн тĕллевĕсем çинчен каласа кăтартнă.

С. СМЕЛОВ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи çарĕç комиссарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, октябрĕн 2-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Алла хĕçпăшал тытма пултаракан граждăнсем октябрĕн 1-мĕшĕнче çар ĕçне вĕренмелли пунктсене пухăнчĕç. Вĕсене ятарласа пиллĕк кунлăх курсран вĕрентсе кăларнă командирсемпе политработниксем хаваслăн кĕтсе илчĕç. Вĕренме пынисене подразделенисем çине уйăрса, çирĕп расписани тăрăх çар ĕçне вĕрентме пуçларĕç. Комсомольскри вĕренӳ пунктĕнче (начальникĕ Перлов юлташ) чи малтан 2 сехет хушши стройпа утма, çавăрăнкалама вĕренчĕç. Унтан Хĕрлĕ Çарăн дисциплинарнăй уставĕпе паллаштарчĕç. Андреев командир ертсе пыракан группа стройпа утма, çавăрăнкалама лайăх пĕлнине кăтартрĕ.

Мăратри вĕренӳ пунктне виçĕ ялсоветĕнчи ĕççыннисем çар ĕçне вĕренме çӳреççĕ. Вĕсем вĕренӳ пунктне вăхăтра пухăнаççĕ. Вĕренекенсем кашниех хăйсем валли винтовка тата граната тума пулчĕç.

Районри ĕççыннисем çар ĕçне вĕренни пысăк вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланса илнĕ, вĕсем çар ĕçне юратса вĕренеççĕ.

П. АРХИПОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5592. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. 6. 38-84 п. л.